27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 НОЯБРЬ 29 ЮНКУН 234(6729) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ялхуҫалӑх машинисене юсама халех тытӑнмалла

Октябрьски районри Туппай-Есмӗл ялӗн урамӗпе пыракан ҫын тарӑнварта лайӑх та юсавлӑ плуг выртнине курма пултарнӑ. Ака вӑхӑчӗсем халӗ ӗнтӗ иртсе кайрӗҫ, колхоз уйхир ӗҫӗсене вӗҫлерӗ, — мӗн тума кирлӗ-ха плуг хӗл вӑхӑтӗнче? Тарӑнварта выртать-и вӑл, колхоз сарайӗнче выртать-и, — пурпӗрех мар-и? Вырттӑр та выртттӑр, вӑхӑт ҫитсен илсе кӳлӗпӗр.

Ҫапла шутлаҫҫӗ хӑшпӗр колхозсен председателӗсемпе бригадирӗсем. Ҫиме ларсан тин кашӑк ҫинчен аса илнӗ пек, вӗсем акана тухиччен машинӑсем ҫинчен шутласа пӑхмаҫҫӗ. Ака туса е тырӑ пуҫтарса пӗтереҫҫӗ те ялхуҫалӑх машинисене хиртех хӑвараҫҫӗ, е урама, лайӑхрах чухне — колхоз килкартишне кӗртсе лартаҫҫӗ. Вара ҫав машинӑсем уйӑхӗ-уйӑхӗпе ҫӑмӑрпа юр айӗнче «шӳсе» лараҫҫӗ. Вӗсен тӗрлӗ пайӗсем унта-кунта йӑванса выртаҫҫӗ. Вӗсем ҫине колхоз председателӗ те, бригадирсем те, — никам та ҫавӑрӑнса пӑхмасть. Вӑл ҫапла пулмалла та тесе шутлама пулать. Нумай вӑхӑт хушши пӗлӗт айӗнче ларса, ҫав машинӑсем чылайӗшӗ тутӑхса ҫӗрсе каяҫҫӗ те стройран тухаҫҫӗ. Вӗсене юсас тесе, кайран нумай вӑй хумалла та, та тӑкак курмалла пулать. Вӑхӑтра юсаймасан, уйхир ӗҫӗнче те пысӑк чӑрмавсем пулма пултараҫҫӗ.

Тӳрех каласан, машинӑсене сарайне кӗртсе тирпейлесе лартасси — йывӑр ӗҫ те мар ӗнтӗ. Анчах ҫапах та ҫав ӗҫе пурнӑҫа кӗртме хӑшпӗр колхозсенче ал ҫитерейместӗҫ. Кунта сӑлтавсем шырама кирлӗ те мар: колхозра хуҫасӑрлӑх пулнӑ пирки кӑна ҫавӑн пек йӗркесӗрлӗхсем тӗл пулаҫҫӗ.

Лайӑх ӗҫлекен колхозсенче урӑхла тӑваҫҫӗ. Вӗсем уйхир ӗҫне туса пӗтернӗ хыҫҫӑнах машинӑна колхоз сарайне илсе килеҫҫӗ те тирпейлесе, тасатса лартаҫҫӗ. Хӑш машинӑн мӗнле пайӗ ҫӗмрӗккине тӗрӗслесе палӑртаҫҫӗ, ӑна ятарласа ҫырса хураҫҫӗ, кайран ҫав пайсене юсама тимӗрҫе хушаҫҫӗ. Ун пек колхозсен машина сарайне кӗрсе пӑхатӑн та савӑнатӑн: сеялкисем те, плугӗсем те, молотилкисем те вӑл колхозсен тап-таса та ҫап-ҫутӑ лараҫҫӗ. Вӑт ку йӗрке! — тесе шутлатӑн. Мӗншӗн-ха пур колхозсенче те ҫавӑн пек йӗрке тума ҫук? Ун пек йӗрке тума пулать, анчах тӑрӑшни ҫитмест.

Акӑ халӗ республикӑри колхозсем уйхир ӗҫӗсене вӗҫлерӗҫ. Халлӗхе, паллах, ялхуҫалӑх машинисем кирлӗ пулмаҫҫӗ. Анчах ваттисем ҫапла каланӑ: «Хӗлле урапа хатӗрле, ҫулла ҫуна хатӗрле», тенӗ. Ҫакӑ вӑл питех те тӗрӗс сӑмах, ӑна пурнӑҫ ҫуратнӑ. Ҫавӑнпа та халӗ машинӑсем кирлӗ пулман пирки вӗсем ҫинчен манса кайсан, эпир йӑнӑш тунӑ пулаттӑмӑр. Машинӑсем ҫинчен эпир пӗр кунлӑха та манма пултараймастпӑр. Колхоз хирӗсенчи ӗҫсене ӑнӑҫлӑн туса ирттерме машинӑсемсӗр май килмест. Ҫӑҫалхи уйхир ӗҫӗсене эпир ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртрӗмӗр пулсан, ҫакна вара эпир, чи малтан, машинӑсемпе туллин усӑ курнине пула турӑмӑр. Килес ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче машинӑсем пӗчӗкрех выран мар, чылай пысӑкрах вырӑн йышӑнса тӑрӗҫ. Ҫавӑнпа та пирӗн ялхуҫалӑх машинисене юсаса хатӗрлеме халех, пӗр кун тӑхтамасӑр тытӑнмалла.

Ҫак кунсенче Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ 1945 ҫулхи ҫураки валли колхозсен ялхуҫалӑх машинисемпе инвентарӗсене юсаса хатӗрлесси ҫинчен сӳтсе-явса постановлени йышӑнчӗҫ. Ҫав постановлени тӑрӑх, пирӗн республикӑри колхозсем ноябрьпе декабрь уйӑхӗсенче 14.800 плуг, 1.260 тимӗр сӳре, 695 сеялка, 819 триер, чылай сортировка тата ытти машинӑсем те юсамалла. Совнаркомпа парти Обкомӗ райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсене кашни колхоз тӑрӑхах ялхуҫалӑх машинисене юсамалли план тата график туса пама, юсав ӗҫӗсене халех организацилеме, ҫапла вара ялхуҫалӑх машинисене 1945 ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне йӑлтах юсаса ҫитермелле тума хушса хӑварчӗҫ.

Курӑнать ӗнтӗ, пирӗн умра пысӑк та ответлӑ задача тӑрать: колхозсен мӗнпур ялхуҫалӑх машинисене килес ҫулхи апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех юсаса хатӗрлемелле. Ҫак задачӑна пурнӑҫа кӗртес тесен, колхозсен тимӗрҫӗ лаҫҫисем халех ӗнтӗ кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлеме тытӑнмалла. Тимӗрҫӗ лаҫҫисем ҫук колхозсене вӗсемпе юнашар колхозсен тимӗрҫӗ лаҫҫисем ҫумне, промкоопераци артелӗсемпе предприятисен тата заводсен тимӗрҫӗ лаҫҫисем ҫумне ҫирӗплетмелле.

Машинӑсене юсанӑ чухне уйрӑмах пахалӑх ҫине тимлӗн ҫавӑрӑнса пӑхмалла. Тимӗрҫӗ алли витӗр тухнӑ кашни машина ҫирӗп те чӑтӑмлӑ пултӑр, вӑл ӗҫ вӑхӑтӗнче ҫӗмӗрӗлсе каяс хӑрушлӑх ан пултӑр. Ҫавӑнпа та юсав пахалӑхне ҫийӗнчех тӗрӗслесе хакламалла. Уйхир бригадисенчен ялхуҫалӑх машинисене йышӑннӑ чухне колхоз председателӗсен акт тата дефект ведомоҫӗсем ҫырса, ҫитменлӗхсене палӑртмалла. Юсанӑ машинӑсене уйхир бригадисене панӑ чухне те ҫавӑн пек актсем ҫырса памалла, бригадӑсенче вара кашни машинӑна уйрӑм колхозника ҫирӗплетсе памалла. Ҫав колхозник хӑйне панӑ машинӑшӑн ответлӑ пулса тӑмалла.

Ялхуҫалӑх машинисене вӑхӑтра та лайӑх пахалӑхпа юсаса хатӗрлес ӗҫре колхозсен тимӗрҫисем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса яни калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Ҫакна шута илсе, райисполкомсемпе парти райкомӗсен, колхоз председателӗсен кашни тимӗрҫе ӑмӑртӑва явӑҫтарма тӑрӑшмалла.

Кашни колхозӑн ялхуҫалӑх машинисене юсамалли график пултӑр, ҫав график ҫирӗп закон пек пурнӑҫа кӗрсе пытӑр, — ҫапла йӗркелесе ямалла пирӗн килес ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшри чи пысӑк задачӑсенчен пӗрне пурнӑҫа кӗртес ӗҫе.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН юлташа

Хаклӑ Иосиф Виссарионович!

Хӗрлӗ Ҫар тунӑ историллӗ аслӑ ҫӗнтерӳсемпе хавасланса, Чӑваш АССР-ӗнчи Октябрьски районри Наратчакки ялсоветӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем, хӑйсен перекетленӗ укҫинчен 43.650 тенкӗ тата 128.250 тенкӗлӗх заем облигацийӗсем пухса, Хӗрлӗ Ҫар валли вӑрҫӑ техники тума государство банкне хывреҫ. Государствӑна тырӑ памалли тата МТС-а натуроплата тӳлемелли плана октябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпех тултарса ҫитерчӗҫ. Планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне 1.040 пӑт тырӑ тата 2.500 пӑт ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫсем пачӗҫ.

Сире, Сталин юлташ, Наратчакки ялсоветӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсем тӑшмана тӗпӗ-йӗрӗпех ҫӗмӗрсе тӑкас сехете ҫывхартма мӗн кирлине пурне те тӑвӗҫ, тесе шантарса калатпӑр.

Иосиф Виссарионович, Сире пирӗн ялсоветри колхозниксемпе колхозницӑсем колхозла салам яраҫҫӗ тата хамӑрӑн юратнӑ Тӑван ҫӗршывшӑн нумай ҫулсем хушши ӗҫлесе пурӑнма сывлӑх сунаҫҫӗ.

Наратчакки ял Совечӗн исполкомӗн председателӗ С. А. ЖУРАВЛЕВ,
Наратчаккинчи территориальнӑй пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ И. С. СЕРГЕЕВА.

Чӑваш АССР, Октябрьское

Наратчакки ял Совечӗн исполкомӗн председательне Журавлев юлташа Наратчаккинчи территориальнӑй пуҫламӗш парторганизаци секретарьне Сергеева юлташа

Наратчакки ялсоветӗнчи колхозниксемпе колхозницӑсене, Хӗрлӗ Ҫар валли вӑрҫӑ техники тума 43.650 тенкӗ укҫа тата 128.250 тенкӗлӗх государство заемӗсен облигацийӗсене пухса панӑскерсене, манран тӑванла салам калӑр тата Хӗрлӗ Ҫар тав туни ҫинчен пӗлтерӗр.

И. СТАЛИН.

ВЛКСМ Обкомӗнче

Куславкка районӗнчи 1927 ҫулта ҫуралнӑ ҫамрӑксем, Сталин юлташ ҫамрӑксен ӗҫне пысӑка хурса хакланипе савӑнса, Тӑван ҫӗршывӑн оборона фондне хывмашкӑн укҫа-тенкӗ пухма тытӑннӑ. Вӗсем кӗске вӑхӑтрах 20.000 тенкӗ пухнӑ.

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн бюровӗ, Куславкка районӗнчи ҫамрӑксен пуҫарӑвне пысӑк вырӑна хурса, ВЛКСМ райкомӗсемпе хула комитечӗсене ҫав ӗҫе пурнӑҫлас тӗлӗшпе политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе анлӑн сарса яма, вӑл ӗҫе комсомолецсемпе ҫамрӑксене йышлӑн явӑҫтарма хушнӑ.

СТАЛИНГРАДРИ ТРАКТОР ЗАВОЧӖ ХАЙЕН ҪУЛТАЛӐКРИ ПЛАННЕ ИРТТЕРСЕ ТУЛТАРНӐ

Сталинградри трактор завочӗ продукци туса кӑлармалли ҫулталӑкри плана ирттерсе тултарнӑ. Магнитогорскри тата Кузнецкри комбинатсен коллективӗсем чӗнсе каланине йышӑнса, трактор тӑвакансем тӑваттӑмӗш кварталта трактор виҫҫӗмӗш кварталтинчен виҫӗ хут ытларах туса кӑларма, тракторсем тӑвас тӗлӗшпе кварталти плана 3 процент ирттерсе тултарма, планран ирттерсе дизель-моторсем, тракторсен запаслӑ пайӗсене туса кӑларма, хӑйсен вӑйӗпе 5.000 тӑваткӑл метр лаптӑкӗш пурӑнмалли ҫуртсем юсаса пӗтерме сӑмах панӑ. (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Кӗрешекен Францин „Норманди" ятлӑ ҫар чаҫӗнчи офицерсене Совет Союзӗн Геройӗ ятне парасси ҫинчен

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче Командовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн тата ҫавӑн чухне хӑюлӑхпа геройлӑх кӑтартнӑшӑн, Ленин орденӗпе тата «Ылттӑн Ҫӑлтӑр» медалӗпе наградӑласа, ҫаксене Совет Союзӗн Геройӗ ятне парас:

Старши лейтенанта Альберт Марселе.
Старши лейтенанта Де-Ля-Пуап Роллана.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль, 1944 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗ.

С. М. Киров ячӗпе уҫӑлнӑ выставка

ЛЕНИНГРАД, ноябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). С. М. Киров ячӗпе тӑракан музейре С. М. Киров пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене кӑтартакан выставка уҫӑлнӑ. Выставкӑн пуҫламӗш отделӗсенче Киров юлташӑн ача тата ҫамрӑк чухнехи пурнӑҫӗ ҫинчен, вӑл Ҫурҫӗр Кавказра ӗҫлени ҫинчен, Астрахань хулине паттӑррӑн хӳтӗленине ертсе пыни ҫинчен, Баку хулинче ӗҫлени ҫинчен калакан документсемпе материалсем нумай.

Сергей Миронович Ленинградра ӗҫленине кӑтартакан залри витринӑсенче ытти документсем хушшинче С. М. Кировӑн парти билечӗ, ЦК ВКП(б) членӗн билечӗ, «Красный путиловец» заводӑн парти комитечӗн членӗн 1-мӗш номерлӗ мандачӗ пур. «Оборонӑна — ҫирӗплетмелле, партие — ҫирӗплетмелле», тенӗ сӑмахсем пӗр витринӑра лайӑх курӑнса тӑраҫҫӗ, вӗсене Сергей Миронович хӑй аллипе ҫырнӑ. Вӑл сӑмахсем — 1934 ҫулхи февралӗн 27-мӗшӗнче ВКП(б) Ленинград Обкомӗн пленумӗнче ВКП(б) 17-мӗш съезчӗн итогӗсем ҫинчен тунӑ докладӑн конспектӗнчен илнӗ сӑмахсем.

«Пирӗн Ленинградри рабочисемпе работницӑсем мирлӗн социализм тунӑ ҫӗрте малти позицисенче ӗҫленӗ, халӗ те ӗҫлеҫҫӗ, вӗсем, кирлӗ пулсан, партипе совет влаҫӗ хушсан, хамӑрӑн аслӑ Совет Союзне алла хӗҫпӑшал тытса хӳтӗленӗ ҫӗрте те малти ответлӑ позицисене йышӑнӗҫ» тенӗ сӑмахсемпе пуҫланать «Киров пирӗнпе» ятлӑ отдел. Ҫав отделра Ленинградра халӑх ополченийӗ туни ҫинчен, Киров районӗнчи хӗҫпӑшаллӑ отрядсем ҫинчен, вӗсем хӑйсен тӑван хулине тӑшмантан хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр хӳтӗлени ҫинчен, Киров заводӗнчи ӗҫсыннисем фронтовиксем патне ҫыру ҫӳретни ҫинчен калакан материалсем, «Киров» крейсерӑн фотоӳкерчӗкӗ, Киров ячӗпе тӑракан заводсенчи ӗҫсыннисем фронт валли хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр ӗҫленине кӑтартакан фотодокументсем тата ыттисем те пур. Выставка Жданов юлташӑн ҫак сӑмахӗсемпе вӗҫленет: «Киров мӗнле ӗҫшӗн кӗрешнӗ, ҫав ӗҫ халь пирӗн нумай миллионлӑ паттӑр халӑхӑн тата аслӑ Сталинӑн ҫирӗп аллинче тӑрать».

ҪӖРҪАМРӐК ПРОМЫШЛЕННОҪӖНЧИ ҪАМРӐКСЕН БРИГАДИСЕН АМӐРТӐВӖ

ЦК ВЛКСМ тата СССР Ҫӗркӑмрӑк Промышленноҫӗн Халӑх Комиссариачӗ шахтӑсенчи тата Наркомуглӗн ытти предприятисенчи ҫамрӑксен бригадисен пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвне организацилесси ҫинчен постановлени йышӑннӑ.

Амӑртура ҫакӑн пек бригадӑсене мала тухнӑ тесе шутлаҫҫӗ: квартал хушшинче производствӑра чи лайӑх ҫитӗнӳсем тунӑ, уйӑхри задание бригадӑн кашни членӗ пӗтӗмпех тата ирттерсе тултарнӑ, материал, инструмент, электроэнерги перекетлесе хӑварнӑ, ҫӗнӗ рабочисене вӗрентсе хатӗрленӗ, ӗҫ квалификацине ӳстернӗ тата ҫавӑн пек ытти ӗҫсем тунӑ бригадӑсене.

Ҫамрӑксен мала тухнӑ бригадисене ВЛКСМ Центральный Комитечӗн тата Ҫӗркӑмрӑк промышленноҫӗн Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата укҫан премии параҫҫӗ.

Амӑрту итогӗсене кварталта пӗр хут пӑхса тухаҫҫӗ. (ТАСС).

ДНЕПР БАССЕЙНӖНЧЕ

Днепр бассейнӗнче ӗҫлекенсем юханшыв транспортне ӑнӑҫлӑн юсаса хута яраҫҫӗ. Темиҫе ҫӗр суднӑна шыв айӗнчен кӑларнӑ тата юсаса пӗтернӗ. Ҫав суднӑсем хушшинче — «Громов», «Ленинград», «Ломоносов», «А. Серов» тата ыттисем те пур. Кунсӑр пуҫне, ҫӗнӗрен тунӑ темиҫе судно ӗҫлеме пуҫланӑ. (ТАСС).

ЗАЕМ ВЫЛЯВӖ

Мускавра Виҫҫӗмӗш пятилетка заемӗн (4-мӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) 12-мӗш вылявӗ пулса иртнӗ. Вӑл икӗ кун хушши пынӑ. Выляври 644.000 выигрыш пулнӑ, мӗн пурӗ 102 миллион та 522.000 тенкӗлӗх. (ТАСС).

Ӳкерчӗк ҫинче (сулахайран сылтӑмалла): Совет Союзӗн Геройӗсем — гварди старши сержанчӗ И. Каландюк, гварди старши сержанчӗ А. Синицын, гварди старши сержанчӗ В. Кочеров, гварди кӗҫӗн сержанчӗ С. Устименко. Вӗсем темиҫешер ҫӗр гитлеровеца вӗлернӗ.

Е. КОПЫТА фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 27-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 26-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Чехословаки ҫӗрӗнче, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан 50 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра — ДОЛГОНЯ, СВИДНИЧКА, КРУЖЛОВА, КАПИШОВА, ЛАДОМИРОВА, ШЕМЕТКОВЦЕ, МАЛЫЕ СТАШКОВЦЕ, ВЕЛИКИЕ СТАШКОВЦЕ, НИЖНЯЯ ОЛЬКА, ГРАБОВЕЦ, НАЦИНА ВЕС, ЛАШКОВЦЕ, ГАТАЛОВ, ДУБРОВКА, ОБОРИН, СЕНТЕШ ятлӑ пысӑк ялсем тата РАДВАНЬ, КОЖКОВЦЕ, ВЕЛИКИЙ ГИРЕШ, СТРАЖНЕ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Ноябрӗн 26-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 21 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

☆ ☆ ☆

Чехословакире пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, 10 километр малалла кайнӑ. Гумсне хулинчен ҫурҫӗртерехре чугун ҫулан пысӑк участокне нимӗҫсенчен тасатнӑ. Каялла чакакан тӑшман ҫулсем ҫине минӑсем лартнӑ, кӗперсене сирпӗнтерсе янӑ. Совет пехотинецӗсем, тусем хушшипе пырса, тусем ҫинчи йышлӑ пӗчӗк шывсем урлӑ каҫа-каҫа, гитлеровецсене ҫине тӑрсах хӑваласа пыраҫҫӗ, вӗсене ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем кӳреҫҫӗ. Пирӗн ҫарсем Лаборец шывӗ урлӑ каҫнӑ та унӑн хӗвеланӑҫ хӗрринче халӑх пурӑнакан чылай пунктсене туртса илнӗ. 470 нимӗҫ салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. 15 тупӑ, 33 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

Ужгород хулинчен хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем айлӑмри улӑхра наступлени туса пыраҫҫӗ. Улӑхри хирсене тата ҫарансене шыв илсе лартнӑ. Шыв-шурсене тата ҫулсем пӑсӑлса кайнине пӑхмасӑрах, совет подразделенийӗсем тӑшмана аякран кайса ҫавӑрса илеҫҫӗ, тӑшман чаҫӗсен каялла чакмалли ҫулӗсене тата-тата лартаҫҫӗ, тӑшман чаҫӗсене пӗтере-пӗтере тӑкаҫҫӗ. Пирӗн пӗр батальон боецӗсем тӑшманӑн шыв урлӑ каҫма хӑтланнӑ зенитчикӗсене сасартӑк атакӑланӑ. Венгерсен 52-мӗш зенитнӑй артиллери дивизионӗн пӗтӗм материальнӑй чаҫне тата обозне тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен отряд нимӗҫсен артиллери батарейин юсавлӑ тупписене тытса илнӗ.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫ пехотин пӗр батальонӗ, танксем тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем пулӑшнипе, ҫапӑҫса разведка тума тытӑннӑ. Нимӗҫсем вунӑ хутчен атакӑна кӗре-кӗре кайнӑ, анчах та вӗсене кашнинчех ывӑта-ывӑта янӑ. Нимӗҫ атакисене сире-сире ярса, пирӗн боецсем 200 гитлеровеца ҫити пӗтерсе тӑкнӑ, ҫавӑн пекех тата тӑшманӑн 5 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе пӑрахнӑ. Тепӗр участокра совет разведчикӗсем ирхине ирех нимӗҫсен траншейисене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та ҫав окопсене туртса илнӗ. Вара гитлеровецсем пӗтӗм кун тӑршшӗпех ҫав позицисене каялла туртса илме тӑрӑшнӑ. Пирӗннисем тӑшман контратакисене пурне те сирсе янӑ. Нимӗҫсен пехотине пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Остроленка хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени артиллерисчӗсем тӑшман тӑнӑ вырӑна вӑйлӑн персе илнӗ. 3 дот тата 2 блиндаж ишсе антарнӑ, нимӗҫсен темиҫе пулеметне тата артиллери батарейине пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра Потиенок лейтенант командир пулса ертсе пыракан боецсем тӑшмана сасартӑк атакӑланӑ та 40 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Пултуск хулинчен кӑнтӑртарахра икӗ енӗн те разведка ушкӑнӗсем кӗрешнӗ. Пӗр участокра пирӗн боецсем ҫӗрле нимӗҫсем тӑракан вырӑна вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та нимӗҫсен блиндажне унти гитлеровецсемпе пӗрлех сирпӗнтерсе янӑ. Совет разведчикӗсем 2 пулемет тытса илнӗ, 5 гитлеровеца тыткӑна илнӗ, вара хӑйсен чаҫне пӗр ҫухату тӳсмесӗрех таврӑннӑ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Лепая (Либава) портӗн районӗнче нимӗҫсен 3.000 тонна таякан суднине шыва путарнӑ.

* * *

Венгерсен 9-мӗш пограничнӑй дивизийӗнчи 29-мӗш полкӑн 3-мӗш батальонӗн тыткӑна лекнӗ командирӗ Миклош Якаб подполковник ҫапла каласа кӑтартнӑ: Венгри ку вӑрҫӑра аяла пулчӗ. Вырӑс ҫарӗсем Тисса шывӗ урлӑ каҫнӑ хыҫҫӑн ҫавна пурте лайӑх ӑнланса илчӗҫ. Венгрире юлашки вӑхӑтра пулса иртнӗ ӗҫсем Венгри ҫарне хытӑ шухӑшлаттарчӗҫ. Салтаксем нумайӑшӗ ӗнтӗ уҫҫӑнах — текех Германи майлӑ пулса вӑрҫмалла мар, теҫҫӗ, вӗсем ҫартан тараҫҫӗ».

Венгерсен 5-мӗш сапернӑй батальонӗн 2-мӗш ротинчен тыткӑна лекнӗ кӗҫӗн лейтенантсем Енэ Мадьяри тата Деже Пал ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Нимӗҫсем Венгрирен ҫапӑҫу хирӗ туса хучӗҫ, вӗсем Венгри ҫӗрӗнче ҫапӑҫас вӑхӑта мӗнле те пулин ытларах тӑсма тӑрӑшаҫҫӗ. Нимӗҫсем Венгрире хӑйсене хӑйсем оккупантсем пек тытаҫҫӗ, вӗсем Венгри хулисемпе ялӗсене ҫаратаҫҫӗ, тустараҫҫӗ».

Венгерсен 1-мӗш танковӑй дивизийӗнчи 1-мӗш мотополкӑн 3-мӗш батальонӗнчен тыткӑна лекнӗ взвод командирӗ Миклош Розгонь лейтенант ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ чылай офицерсемпе вӑрҫӑ лару-тӑрӑвӗ ҫинчен калаҫнӑ. Вӗсем пурте — Венгри вилӗм ҫулӗпе пырать, теҫҫӗ. Нимӗҫсем наступлени туса пыракан вырӑс ҫарӗсен ҫулне Венгри салтакӗсен виллисемпе картласа лартасшӑн. Офицерсем нумайӑшӗ ҫапла шутлаҫҫӗ: Венгрин хуть те мӗнле пулсан та Германипе ҫыхӑнса тӑма пӑрахмалла», теҫҫӗ.

Финлянди вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Совет Союзӗнчен илсе кайнӑ ҫыльӑх-чӗрлӗхе каялла тавӑрса парать

ПЕТРОЗАВОДСК, ноябрӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Финляндипе перемири ҫинчен тунӑ Килӗшӳӗн 14-мӗш статьи каланӑ тӑрӑх, Петрозаводск хулинчен Финляндири Энсо хулине Карел-Финн ССР-ӗн представителӗсем лашасем илме тухса кайнӑ. Ку лашасене Наркомлеса тата Карел-Финн республикинчи колхозсене тавӑрса параҫҫӗ.

ЛАТВИРИ ЯЛСЕНЕ ЭЛЕКТРИЧЕСТВО КӖРТЕҪҪӖ

Латвири Лубански, Ляудонски тата ытти вулӑссенче хресченсем ялсене хӑйсен вӑйӗпе электричество кӗртеҫҫӗ. Вӗсем нимӗҫсем ишнӗ ҫуртсем айӗнчен динамо-машинӑсене кӑлараҫҫӗ те вӗсене вырӑнти электриксем пулӑшнипе юсаҫҫӗ. Механиксем вӗсем ҫумне нимӗҫсенчен тытса илнӗ локомобильсем майлаштарса лартаҫҫӗ. Ҫавӑн пек питӗ пӗчӗк станцисем шкулсене, больницӑсене тата хресчен ҫуртӗсене ҫутатма электричество токӗ параҫҫӗ. (ТАСС).

ПИТӖ ПӖЧӖК ТУПӐ

Пӗр хулара артиллери училищисенче вӗренекен курсантсем 85 миллиметрлӑ тупӑн модельне туса хатӗрленӗ. Ҫав тупӑ пысӑк тупӑ пекех ӗҫлет. Ӑна снарядпа авӑрлаҫҫӗ, унтан ӑна, механизмсемпе усӑ курса, тӗл пемелле майлаштарса лартаҫҫӗ, унтан вӑл персе ярать, пенӗ хыҫҫӑн кӗпҫи каялла ыткӑнса каять, гильзи хӑех тухса ӳкет.

Ҫав тупа пӗчӗк сӗтел ҫине лартнӑ. Унӑн пӗчӗк те йышлӑ пайӗсем тӗлӗнмелле тӗрӗс ӗҫлеҫҫӗ. (ТАСС).

ЧУГУН ҪУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТЕРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ IV-мӗш КВАРТАЛТИ ПЛАНА НОЯБРӖН 25-мӗшӗ ТӖЛНЕ МЕН ЧУХЛӖ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Плана тултарнӑ (процентпа): Турттарасенепе	Плана тултарнӑ (процентпа): Хатӗрлессипе	Мӗнле вырӑн йышӑнать: Турттарассипе	Мӗнле вырӑн йышӑнать: Хатӗрлессипе
Йӗпреҫ	79,2	68,6	1	2
Куславкка	67,8	91,2	2	1
Шӑхасан	63,6	65,5	3	4
Октябрьски	57,6	64,2	4	6
Первомайски	54,6	49,3	5	16
Вӑрнар	48,7	30,8	6	23
Комсомольски	48,4	51,1	7	15
Шупашкар	48,0	59,5	8	9
Чурачӑк	47,5	45,6	9	18
Красноармейски	46,6	61,1	10	7
Вӑрмар	46,5	31,8	11	22
Сӗнтӗрвӑрри	44,0	60,8	12	8
Хӗрлӗ Чутай	42,4	59,2	13	10
Пӑрачкав	42,0	65,6	14	3
Калинино	41,8	47,2	15	17
Елчӗк	41,1	51,2	16	14
Чкаловски	39,3	59,1	17	11
Канаш	37,6	29,2	18	24
Етӗрне	36,8	37,0	19	19
Элӗк	36,3	27,8	20	25
Ҫӗрпӳ	33,7	55,3	21	12
Тӑвай	31,8	34,4	22	20
Советски	29,7	33,0	23	21
Ҫӗмӗрле	29,0	65,4	24	6
Муркаш	26,8	27,4	25	26
Сӗнтӗр	26,1	24,6	26	28
Кувакино	26,0	55,0	27	13
Ишлей	20,0	26,3	28	27
* * *				
Вӑрнар вӑрман хуҫалӑхӗ	64,0	65,0	1	3
Улатӑр вӑрман хуҫалӑхӗ	60,0	66,0	2	2
Алтышево вӑрман хуҫалӑхӗ	51,0	56,0	3	5
Кире вӑрман хуҫалӑхӗ	51,0	39,0	4	11
Йӗпреҫ вӑрманпромхозӗ	48,0	60,0	5	4
Вӑрнар вӑрманпромхозӗ	48,0	54,0	6	6
Канаш вӑрманпромхозӗ	46,0	37,0	7	12
Йӗпреҫ вӑрман участокӗ	45,0	71,0	8	1
Йӗпреҫ вӑрман хуҫалӑхӗ	44,0	47,0	9	7
Хӗрлӗ Чутай вӑрман пункчӗ	35,0	42,0	10	9
Кире вӑрман пункчӗ	35,0	42,0	11	8
Буинск вӑрман пункчӗ	34,0	40,0	12	10
Ҫӗмӗрле вӑрман пункчӗ	31,0	35,0	13	13
Ҫӗмӗрле вӑрман хуҫалӑхӗ	28,0	30,0	14	11

Финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑх

Партипе совет активӗ колхозсене тухса кайрӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, ноябрӗн 28-мӗшӗ. (Телефонпа, хамӑр корр.). Тӑваттӑмӗш кварталти финанс планне тултарса ҫитермешкӗн районри ял Совечӗсен пӗр миллион тенкӗ ытла укҫа пухмалла. Паянхи куна район укҫа-тенкӗ пухмалли кварталти плана 63 процент тултарнӑ. Укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе уйрӑмӑнах Шупуҫ ял Совечӗнчи колхозсенче лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем кварталти плана 77 процент тултарнӑ. Тусай, Типҫырма ял Совечӗсем те шупуҫсенчен нумай кая юлман.

Ҫав вӑхӑтрах Албахтино ял Совечӗ кварталти финанс планне пурӗ те 18 процент ҫеҫ тултарнӑ, мӗншӗн тесен унта колхоз руководителӗсемпе ялти актив ҫав ответлӑ ӗҫ ҫине тивӗҫлипе ҫавӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ. Албахтинӑри «Партизан» колхоз председателӗ Осипов юлташ хӑй те ялхуҫалӑх налогне пӗр пус та тӳлемен. «Сила» колхоз председателӗ Павлов юлташ та Осиповран пример илет пулмалла, вӑл та ялхуҫалӑх налогне тӳлемен.

Мартынкасси, Ямайкасси, Шурҫырма тата ытти хӑшпӗр ял Совечӗсем те кая юлса пыраҫҫӗ-ха. Вӗсем уйӑхлӑх пуҫланнӑ хыҫҫӑн та ӗҫре татӑклӑ улшӑнусем туман.

ВКП(б) Обкомӗ финанс планне тултарса ҫитермелли уйӑхлӑх ирттерме йышӑнни ҫинчен илтсенех, ӑна районри партипе совет активӗн пухӑвӗнче сӳтсе-явнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн ял Совечӗсемпе колхозсене финанс планне тултарас тӗлӗшпе пулӑшма районри партипе совет активӗнчен 40 ҫына яхӑн ялсене тухса кайрӗҫ.

ЛИТЕРАТУРА ХЫПАРӖСЕМ

„Сержант Ванюшин"

Ҫуллахи гастрольсенче Чӑвашсен Академиллӗ театрӗ виҫӗ бригадӑпа ҫӳрерӗ. Виҫӗ бригади те Н. Мранькан «Сержант Ванюшин» ятлӑ пьесине лартнӑ. Ӗҫсыннисем ӑна пур ҫӗрте те кӑмӑлласа йышӑннӑ, мӗншӗн тесен ку пьеса пирӗн ҫамрӑксем фронтра нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнине кӑтартса парать. Халь Чӑвашгосиздат «Сержант Ванюшин» пьесӑна уйрӑм кӗнеке туса кӑларать.

Сӑвӑ кӗнеки

И. Малгай поэтӑн «Сӑвӑсем» ятлӑ кӗнеки пичетленсе тухрӗ. Сборнике пурӗ 32 сӑвӑ кӗнӗ, вӗсене автор 1942—1944 ҫулсенче ҫырнӑ.

Хӑҫан радио ӗҫлеме пуҫлать-ши?

Халӗ, вӑрҫӑ кунӗсенче, ялсенче радио мӗнле пысӑк вырӑн йышӑнса тӑни пуриншӗн те паллӑ. Вӑрнар районӗнче темиҫе ҫул ӗнтӗ радиоузел ӗҫлет. Анчах ялсенче радио мӗнле илтӗннипе вӑл пачах интересленмест. Сӑмахран, Хапӑс ялӗнче тахҫантанпах радио ӗҫлемест. Мӗншӗн тесен радио юписем тӳне-тӳне кайнӑ е тата тепӗр тӗлте пралукӗсем татӑла-татӑла кайнӑ. Вӗсене никам та юсамасть. Радиоузел монтерӗ Иванов, вӑхӑт ҫук тесе, ялсене радио юсама тухмасть. Унӑн помощникӗсен те ялсене тухма вӑхӑт ҫук-ши вара?

В. КИРИЛЛОВ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Эстони Советлă Социализмлă Республикинче тунă тискер ĕçсем çинчен

(Фашистла нимĕç захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси пĕлтернинчен)

Эстони Советлă Социализмлă Республикине оккупациленĕ хыççăн [illegible] кунсенчех нимĕçсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем Эстони халăхĕн государстволлăхне [illegible] культурипе искусствине тата наукине пĕтерсе лартма, мирлĕ халăхсене вĕлерсе пĕтерме тата Германие каторгăна хăваласа кайма, хуласемпе ялсене, хуторсене çаратма тытăннă.

* * *

Совет Эстонийĕ колони туса хума хапсăнса, гитлеровецсем вăл уйрăм государство пулса тăнине тата унăн никама пăхăнманлăхне пĕтĕмпех пĕтерсе лартнă. Эстони халăхĕсене унăн политикăлла экономикăлла мĕнпур правине [illegible].

Гитлер, 1941 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче декрет кăларса, Эстони территорийĕпе [illegible] кăларнă. [illegible] Эстонире [illegible] пуçланса кайнă, мирлĕ халăха асаплантарасси тата вĕсене мăшкăлласси пуçланса кайнă. Эстони халăхĕн политикăлла [illegible]. 1942 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче нимĕç мар [illegible] ятарласа закон кăларнă. Çав закон Германие тата [illegible].

Розенберг хушнă тăрăх, «чрезвычайнăй судсем» тунă. Вĕсем кирек хăçан та нимĕçсен [illegible] приговорсем çес кăларнă. [illegible] вĕлермелли приговорсене политикăллă [illegible].

Эстони халăхне ытларах чура туса тытас тĕллевпе пусмăрçăсем шутла «Эстони самоуправленийĕ» туса хунă. Унăн пуçĕнче Тăван çĕршыва сутнă Мяэ тăнă. Анчах çак постановленисемпе инструкцисене кăларнă пулса [illegible] Тĕрĕссипе каласан, мĕнпур постановленисене нимĕç влаçĕсем кăларнă. Эстонире нимĕç чĕлхине государство чĕлхи туса хунă.

Фашистсен генеральнăй комиссарĕ Лицман, çӳлтен кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пырса, Эстони халăхĕн никама пăхăнманлăхне тата унăн государствине тунă. Чăннипе илсен, вăл хăйĕн сăмахĕсенче «Эстонецсен хăйне уйрăм государстви» урăх нихăçан та пулмасть, тесе каланă. Гитлерла захватчиксем нумай документсенче Балтика тинĕсĕнче нимĕçсем пуç пулса тăрассине çирĕплетме тăрăшни çинчен каланă.

* * *

Фашистла пусмăрçăсем Эстоние Германи колонийĕ туса хунă хыççăн Эстони халăхĕн культурине те хăварма пултарайман.

Оккупантсем чи малтан библиотекăсене тасатма тытăннă. Эстони хулисен площачĕсенче кăвайтсем ялкăшма пуçланă, унта Эстони халăхĕн культура пуянлăхĕсем тата Европăри халăхсен литературин чи лайăх произведенийĕсем çуннă. Фашистсен пусмăрне лекнĕ писательсемпе поэтсене хăйсен произведенийĕсене пичетлеме паман. Вĕсенчен нумайĕшне фашистсем концентрациллĕ лагерьсене хупса лартнă, тĕрмесенче тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Нимĕçсемшĕн ĕçлеме килĕшмен талантлă художниксемпе артистсен тата ученăйсен пурнăçĕ те çавăн пекех пулнă. Гитлеровецсем искусствăн 10.000 произведенине ытла Германие турттарса кайнă. Вĕсем Эстонин Тарту çывăхĕнчи наци музейне çунтарса янă, Тартури 300 çул ытла ĕçленĕ университета çаратнă тата чылай ишĕлтернĕ. Нимĕçсем театрсенче нимĕç чĕлхипе çырнă операсемпе оперетăсене кăтартма ирĕк панă. Хăйсен тухса тарас умĕн вĕсем чылай хуласенчи театрсене çунтарнă яла тата архитектурăпа историллĕ палăксене ишĕлтернĕ.

* * *

Вăрçă умĕнхи юлашки çулсенче Эстони промышленноçĕ вăйлăн аталанса пынă. Халăх хуçалăхĕнче çĕнĕ промышленноç пысăк вырăн йышăннă. Нимĕç ирсĕрĕсем çав промышленноç предприятийĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех пĕтерсе лартнă. Çавăн пекех вĕсем тата Тарту хулинчи [illegible] ĕçлекен [illegible] Нарва хулинчи металл [illegible] завода, Пярну хулинчи моторсем тăвакан завода тата ытти предприятисене те ишĕлтернĕ.

Фашистсем Нарвăри «Кренгольмски мануфактура» ятлă пир-авăр фабрикине пĕтĕмпех ишĕлтерсе тăкнă. Вăл фабрика пирлĕ [illegible] çур миллиона çывăх [illegible] пулнă. Нимĕçсем Нарвăри пир-авăр предприятийĕсене ытти [illegible] те пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем Эстони хулисенче 2.200 çурта çунтарса янă е ишĕлтернĕ. Уйрăмăнах Нарва хулине тискеррĕн аркатнă. Унта 3.500 çуртран 114 çурт кăна юлнă. Таллин хулинче [illegible] 1.885 çурта ишĕлтернĕ. Фашистла нимĕç захватчикĕсем Эстони столицине [illegible] ишĕлтерме шутланă. Таллин хулине ирĕке кăларнă хыççăн унта 75 çĕрте [illegible] вырăнсенче 100 тонна ытла тротил [illegible] сирпĕтмелли [illegible]. Гитлеровецсем хуласен [illegible] коммунальнăй предприятисене те сиен кунă.

Гитлеровецсем [illegible] Эстони [illegible] нумай [illegible] хунă.

Оккупаци влаçĕсем халăха медицина енчен пулăшу паман тата шывсене сыхламалли чи кирлĕ йĕркесене те пăснă. Фашистла нимĕç захватчикĕсем чирсенчен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисене складсем, казармăсем туса хунă е çунтарса, ишĕлтерсе пĕтернĕ.

* * *

Нимĕç захватчикĕсем Эстонири ялсенче пурăнакан халăхсене ним чарусăр çаратнă. Совет влаçĕ 1940 çулта начар пурăнакан хресченсене панă 404.000 гектар çĕре нимĕçсем каялла туртса илнĕ. Вĕсем хресченсене çĕрпе усă курнăшăн тӳлемелли кивĕ парăмсене кăна мар, совет влаçĕ панă кивçен укçана та тӳлеттернĕ.

Нимĕçсем тискеррĕн хуçаланнипе тата Эстони хресченĕсене урса кайсах пусмăрланипе пула, акакан çĕр лаптăкĕ 1944 çулта 1941 çулхинчен 35 процент чакнă. Çĕрулми 31 процент, йĕтĕн 64 процент сахалтарах акнă. Нимĕçсем хуçаланнă çулсенче 35.000 гектар вăрмана пĕтерсе тăкнă.

Нимĕçсем хресченсенчен 107.000 лаша, 31.000 ĕне, 214.000 сысна, 790.000 пуç кайăк-кĕшĕк туртса илсе, Германие илсе кайнă, 50.000 хурт-хăмăр çемьине яхăн çаратнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнче Эстонире 25 МТС организациленĕ. Вĕсенче гусеницăллă тракторсем 350 пулнă. Нимĕçсем çав станцисене ишĕлтерсе çаратнă, çавăн пекех тата вĕсем хресченсен хăйсен ялхуçалăх машинисемпе ĕç хатĕрĕсене те турта-турта илнĕ.

* * *

Фашистла нимĕç захватчикĕсем хăйсем тытса илнĕ Эстони территорийĕ çинче концентрациллĕ лагерьсем, тĕрмесем, гестапо çурчĕсем нумай туса тултарнă, вĕсем мирлĕ граждансене тата тыткăна лекнĕ çар çыннисене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пынă.

Лагерьсене хупнă совет çыннисене номерсем парса тухнă, вĕсен хушамачĕсене пĕтернĕ, вĕсене саламатсемпе, тимĕр туясемпе хĕненĕ, 16—18 сехет хушши йывăр ĕç ĕçлеттернĕ. Нормăна тултараймасан апат çитермен, хытă хĕненĕ тата пере-пере пăрахнă. Хăйсен ирсĕр ĕçĕсене пытарас тесе, нимĕçсем çав вĕлернĕ çынсене кăвайтсем çинче çунтарнă.

Таллин хулинчен 4 километр кăнтăр хĕвеланăçнерехре, Клога-Аэдлин текен вырăнта, нимĕç оккупанчĕсем 1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче «Тодт» организацийĕн концентрациллĕ лагерьне тунă. Унта арçынсемпе хĕрарăмсемшĕн, вĕсем миçе çултине пăхмасăрах, чăтма çук йывăр йĕрке туса хунă. Лагерьти çынсене кашни кунах халăх умĕнче ятарласа тунă станок çине хурса хĕненĕ. Мĕншĕн те пулин айăпа кĕрсен, икĕ талăк апатсăр хăварнă, шартлама сивĕсенче 2—3 сехетлĕхе юпа çумне çыхса лартнă. Лагере хупнă çынсене охранниксем-эсэсовецсем кăна мар, лагерь администрацийĕпе нимĕç врачĕсем те мăшкăлланă. Нимĕç врачĕ Ботман лагерьти чирленĕ çынсене пĕрмаях эмелсем парса вĕлернĕ, ӳт ăшне вĕлермелли эмел янă. Лагерьти санитар Гент лагере хупнă 23 вăтă çынна пуртăпа касса вĕлернĕ. Свидетель И. М. Ратнер çапла каласа панă: «1944 çулхи февраль уйăхĕнче лагерьте икĕ ача çуралнă, вăл ачасене никĕшне те кочегаркăри кăмакана пăрахса çунтарнă. Ачасене мĕнле çунтарнине эпĕ хамăн куçăмпах куртăм».

1944 çулхи сентябрĕн 19-мĕшĕнче нимĕçсем лагере хупнă çынсенчен 300 çынна суйласа илнĕ те вĕсене вăрман уçланкинче вутă йăтма янă. 700 çынна кăвайтсем чĕртме хушнă. Кăвайтсем чĕртнĕ хыççăн нимĕç палачĕсем лагере хупнă çынсене массăллăн пере-пере вĕлерме тытăннă. Чи малтанах вĕсем вут йăтакансемпе кăвайтсем хуракансене, унтан вара ыттисене те персе пăрахнă. Персе пăрахнисен виллисене кăвайтсем çинче çунтарнă.

1942 çулхи июль уйăхĕнче гитлеровецсем Расику станцине 3.000 çын илсе пынă та вĕсене автобуссем çине лартса Калеви-Лийва сăрчĕсем патне илсе кайнă. Унта вара вĕсене персе пăрахнă. Çав сăртсем патне гитлеровецсем 1943—1944 çулсенче те мирлĕ граждансен çĕнĕ ушкăнĕсене иле-иле пырса персе вĕлернĕ. Тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, фашистсем çав сăртсем патĕнче 5.000 çынна персе пăрахнă.

Нарва хулинчи лагерьсенче яланах 10.000 çын пурăннă. Виçĕ çул хушшинче унта мирлĕ граждансемпе тыткăна лекнĕ совет çыннисене 30.000 çынна вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çав тискер ĕçсемшĕн, культурăпа пурлăхсен хаклă япалисене ишĕлтернĕшĕн тата çаратнăшăн гитлерла правительство, нимĕçсен çар командованийĕ, çавăн пекех тата тискер ĕçсене организацилекен тата тăвакан çак çынсем айăплă тесе шутлать: генерал-фельдмаршал фон Лееб, генерал-фельдмаршал фон Кюхлер, генерал-полковник Модель, генерал-полковник Линдеман, пехота генералĕ Фриснер, генерал-полковник Шернер; нимĕçсен генеральнăй комиссарĕ обергруппенфюрер Карл Лицман тата ыттисем те.

Вĕсене пурне те хăйсем тунă преступленисемшĕн хаяр наказани памалла, тет. (ТАСС).

Амăшĕн савăнăçĕ

Пĕр кĕрхи кун колхоз правленине пилĕк-ултă хĕрарăм пырса кĕчĕç. Вĕсем халĕ пурте килхуçисем: хăшĕсен юратнă упăшкисем, теприсен тата ывăлĕсем Отечественнăй вăрçă фронтĕнче çапăçаççĕ. Халĕ вĕсем колхоз правленине ятарласах хăйсем çулталăк хушшинче колхозра ĕçлесе миçе ĕçкунĕ туни çинчен тĕплĕн тĕрĕслесе пĕлме килнĕ. Колхоз счетоводĕ, Отечественнăй вăрçă инвалидĕ В. Окунев юлташ вĕсене кам миçе ĕçкунĕ туни тата мĕн чухлĕ тырă илме пултарни çинчен каласа пачĕ. Правлене пынă хĕрарăмсенчен ĕçкунĕсен минимумне тултарманнисем çук, кашниех 130—200 ĕçкунĕ тунă. Колхоз правленийĕ вĕсене çулталăк вĕçĕнче преми пама палăртса хунă.

Правленипе юнашар пӳлĕмре — колхозри вулав çуртĕнче — музыка сасси илтĕнсе кайрĕ, сĕрме купăс хĕлĕхĕсем илемлĕн те уççăн янăраса Совет Союзĕн Гимнне кĕвĕлеме пуçларĕç. Ялти пуçламăш шкулта вĕрентекен учитель П. Семенов юлташ скрипка çинче вылять. Вулав çуртне пухăннă çамрăксем вĕсемпе пĕрлех юрлаççĕ. Хĕрарăмсем мĕн юрласа пĕтеричченех нимĕн шавламасăр, лайăх тăнласа, итлесе тăчĕç. Унтан вара вулав çуртĕнчи тĕрлĕрен картинăсене пăхма тытăнчĕç. Вĕсене пуринчен ытларах, хаçатран касса çыпăçтарнă пĕр ӳкерчĕк питĕ интереслентерчĕ. Вăл ӳкерчĕк çинче — хĕрарăмсен ушкăнĕ, тепĕр шурă сухаллă ватă çын вара вĕсене темĕнле пĕчĕк коробкăсем валеççе парать.

— Ку Калинин юлташ пулас-ха, — терĕ ӳкерчĕк çине пăхакан колхозницăсенчен пĕрийĕ, — ыттисем мĕнле хĕрарăмсем вара вĕсем? Мĕн тума пынă-ши вĕсем Верховный Совета, унта ĕçлекенсем мар пулĕ-çке? Илемлĕ тумланнă хăйсем. Пурте ватă курăнать тата...

— Çук, Верховный Советра ĕçлекенсем мар, — терĕ вулав çурчĕн пуçлăхĕ, хĕрарăмсем патне пырса тăрса, — вĕсем ача амăшĕ-героиньăсем. Куратăр-и, Калинин вĕсене орденсем парать? — Вулав çурчĕн заведующийĕ колхозницăсемпе хĕрӳллĕ калаçу пуçлать. Вăл СССР Верховный Совет Президиумĕн «Йывăр çын пулнă хĕрарăмсене, нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене государство енчен пулăшассине ӳстерессипе, ача амăшĕсен тата ачасен пурнăçне сыхлассине вăйлатасси çинчен, «Ача амăшĕ—героиня» тесе хисеплĕ ят тăвасси, «Ача амăшĕн мухтавĕ» ятлă орден тата «Ача амăшĕн медалĕ» ятлă медаль тăвасси çинчен» кăларнă Указа вуласа, тĕплĕн ăнлантарса пама тытăнать. Хаçат çинчен касса илсе стена çумне çыпăçтарнă ӳкерчĕк çинчен те каласа парать. Хĕрарăмсем ăна питех те тимлĕн итлерĕç, ăнланайманнисене вулама чарачарах ыйтса пĕлчĕç. Çапла калаçса ларнă хушăра хĕрарăмсенчен пĕрин, «Заря» колхозăн Зеленовка ятлă выселкинче пурăнакан Анна Сергеевăн куçĕсем шывланса кайрĕç. Вăл макăрать. Шăппăн, пĕр сасă кăлармасăр, анчах та питĕ пăлханса макăрать. Ку вулав çурчĕн заведующине те питĕ тĕлĕнтерчĕ. Вара вăл ăна ăшă сăмахсемпе йăпатма тытăнчĕ.

— Çук. Эпĕ хурланса мар, пĕртте хурланса мар... Чун савăннипе, юлташсем. Каçарăр, — тет Сергеева, — пурăнас килсе кайрĕ-ха ман капла. Эпĕ те çакăр ача амăшĕ вĕт. пĕлетĕр хăвăр та. Мĕнле ытла лайăх закон пулчĕ-ха ку закон. Тура вăрăм ĕмĕр патăрах вăл Сталина. Тавта пуçах ăна...

Унтан вара, вулав çурчĕн заведующийĕ ыйтнипе пула, А. Сергеева колхозница хăйĕн хуйхи-суйхисем çинчен пĕтĕмĕшпех каласа пачĕ.

— Питĕ кулянса çӳреттĕм эпĕ юлашки вăхăтра, — терĕ вăл. — Ачасем пирки кулянаттăм. Нумайăн вĕт-ха вĕсем ман. Хăвăр та пĕлетĕр, манăн упăшкам çулталăк хушши ĕнтĕ фронтран пĕр хыпар та ямасть. Çавăнпа та ачасене пăхса ӳстерессипирки питĕ кулянаттăм эпĕ. Çамрăк вĕт-ха вĕсем, пĕчĕк чĕпĕсем. Кĕçĕнни, Надежда, кăçал тин виççĕ çине кайрĕ. Асли не качча патăм. Вăл та ачаллă пулчĕ. Килте татах çиччĕн юлчĕç. Ман пăхса ӳстерсе çын тумалла вĕт вĕсене. Пăртак ӳссе кăклансан хăть хама та пăрахмĕç теха... Вăл ачасем пирки эп мĕнчул пăлханман-ши?... Колхоз пуçланаччен-ха вăл, хăшпĕр чарусăр чĕлхесенчен темĕнле намăс сăмахсем те пайтах илтсе тултартăм... Анчах, совет влаçĕ пăрахмасть пире! Пурăнма хушать. Пулăшу парать. Эпĕ те кирлĕ çын иккен, усăллă çын...

Унтан вара Сергеева хăйĕн Валя ятлă хĕрачине пуçламăш шкула, Виталий ятлă ывăлне туллимар вăтам шкула вĕренме яни çинчен, тепĕр ывăлне — Кольăна — тракторист пулма вĕренме ярас кăмăлĕ пурри çинчен те каласа пачĕ. Хăй вăл кăçал, кăштах чирлĕрех пулин те, çу каçичченех хуралта тăнă, пушарпа кĕрешекен дружинăн активлă членĕ. Ĕçлеме пултаракан ачисене те пурне те ĕçе явăçтарнă.

Савăнать сакăр ача амăшĕ. Совет правительстви хăйне пулăшу панишĕн чун-чĕререн савăнать вăл. Вăрçă пуçарса яракан ирсĕр фашистсене вăл чун-чĕререн кураймасть, тарăхать вĕсене, ылханать.

Ахальтен мар ĕнтĕ А. Сергеева колхозница, Хĕрлĕ Çар фончĕ валли тесе, бригадăра пуринчен малтан виçĕ пăт çĕрулми пачĕ, государство умĕнчи пур тĕрлĕ парăмсене те вăхăтра парса татнă.

А. Сергеева колхозницăпа пĕрле пирĕн хамăрăн та пĕтĕм тĕнче илтмелле çапла калас килет:

— Сывă пултăр пире телей паракан Совет влаçĕ! Тĕп пулччăр этем сăнне çухатнă фашистсем!

Степан АСЛАН.

«Заря» колхоз, Шăхасан районĕ.

ТИМУРОВЕЦСЕН ЙЫШНЕ ӲСТЕРЕР, ВĔСЕН ĔÇНЕ ВĂЙЛАТАР!

Тимуровецсен юхăмĕ — ачасен патриотла юхăмĕ пулса тăрать.

Фронтри боец тăван килйышĕнчен илнĕ çыру çинче тимуровецсем унăн çемьине тăванла пулăшни çинчен вуласа пĕлсен, вăл чĕререн савăнать. Станок умĕнче ĕçлекен работница е тата уйхирте ĕçлекен колхозница, хăйĕн ачине хастарлă тимуровецсен аллине хăварса, ĕçре шанчăклăн тата тăрăшса ĕçлет.

Тимуровецсем тĕрлĕрен ĕçсем тăваççĕ. Канашри 1-мĕш номерлĕ шкулти тимуровецсен команди фронтовик-орденоносец Воронцовăн амăшне тăтăшах пулăшса тăнă. Вăл Канашран куçса каяс умĕн тимуровецсем ăна Максим Горькийĕн произведенийĕсене парса парнеленĕ. Воронцовăн амăшĕ халь Мускавран ачасене çавăншăн ăшă сăмахсемпе тав туса çыру çырать.

Çав районри Калинино вăтам шкулĕнчи тимуровецсен команди те мухтава тивĕçлĕ ĕçлет. Командăра пурĕ 7 пионер. Вĕсем фронтовиксен икĕ çемьине шефа илнĕ, вĕсене апат-çимĕç хатĕрленĕ çĕрте пулăшаççĕ. Çавăнпа та тимуровецсен команди, старши вожатăй Еремича юлташ ертсе пынипе, ятарласа повар ĕçне вĕреннĕ.

Елчĕк районĕнчи Хирти Пăва вăтам шкулĕнчи пионер-тимуровецсем фронтовиксен ачисене валли 15 килограмм çăм, 13 мăшăр алса, 2 çĕлĕк тата ытти япаласем те чылай пухса панă.

Улатăр хулинчи 1-мĕш номерлĕ пионерсен дружининче пур отрядсенче те чи активлă пионерсенчен тимуровецсен командисене тунă. Вĕсем фронтовиксен çемьисене, шефа илнĕ госпитале, шкула, ачасен приемникне вутă татса, çурса панă. Çавăн пекех вĕсем чугун çул транспортне те вутă пушатас ĕçре сахал мар пулăшу панă. Пĕтĕмпе 8 вагон вутă пушатнă. Çавăншăн чугун çул узелĕ вĕсене тав тунă. Тимуровецсем ачасен приемникĕ валли литература тата вылямалли япаласем пухса панă.

Вăрмар районĕнчи пионерсемпе шкул ачисем çуллахи вăхăтра ача яслисем валли 427 кĕнеке, 2.458 тетте пухса панă. Çак районри Пинерти 7 çул вĕренмелли шкулти тимуровецсен команди каникул вăхăтĕнче яслĕре ĕçленĕ, ачасене пăхнă, юрлама-ташлама вĕрентнĕ.

Шупашкарти хĕрачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнчи тимуровецсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарнă кунсенче фронтовиксен ачисен икĕ утренникне ирттернĕ.

Тимуровецсем нимĕнле ĕçе те тиркесе тăмаççĕ. Вĕсем урай çăваççĕ, вутă çураççĕ, пĕчĕк ачасене пăхаççĕ, шыв кӳреççĕ, апат пĕçерме пулăшаççĕ. Çак ĕçсемпе вĕсем хăйсен патриотизмне кăтартаççĕ.

Çак юхăмăн пĕлтерĕшне хак пама та йывăр. Вăл ачасене государство умĕнчи ответлăха туйса ĕçлеме, коллективизма хăнăхма, опсĕмлĕ тата чăтăмлă пулма, хăй интересне общество ĕçĕпе çыхăнтарса тума, ĕçе юратма вĕрентет. Çак пахă воспитание ачасем классенче е пионер отрячĕсенче сăмахпа илтнипе мар, хальхи вăхăтри вĕресе тăракан пурнăçа хутшăнса илеççĕ. Çавăнпа та пионер çулне çитнĕ пур ачасене те тимуровецсен ретне явăçтармалла.

Комсомол работникĕсемпе учительсен, пионер вожатăйĕсен тивĕçĕ вăл — совет ачисен патриотла юхăмне пуçарса ертсе пырасси. Тимуровецсен пахă ĕçĕсем çинчен ытти ачасене каласа памалла. Улатăр горкомĕ, çакна ăнланса илсе, пур комсомол организацисемпе вожатăйсене те тимуровецсен патриотизмла юхăмне анлăн сарма хушнă.

А. ТОКАРЕВ.

ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

Хор кружокĕ ĕçлет

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. Уйпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕренӳ çулĕ пуçлансанах вĕренекенсен хор кружокне организацилерĕç. Хор кружокĕн занятийĕсем йĕркеллĕ пулса пыраççĕ. Занятисенче кружок членĕсем çĕнĕ юрăсем вĕренеççĕ. Халĕ вĕсем «Гимн Советского Союза», «Песня о Сталине», «Марш танкистов», «Хĕвелĕмĕр Сталин» ятлă юрăсене юрлама вĕреннĕ.

Хор кружокĕн членĕсем занятисене пысăк интереспа çӳреççĕ. Кружок руководителĕ В. Ильина учительница хăйĕн ĕçне пултаруллăн туса пырать.

П. ТИХОНОВ.

Тĕрĕсленсе килнĕ материалсем тăрăх

„Колхоз тырпулне салатать“

Çĕрпӳ районĕнчен пирĕн редакцине çакăн пек ятлă материал килнĕччĕ. Унта «Куганар» колхозăн кладовщикĕ Мария Морозова колхоз тырпулне салатни çинчен çырнă. Çĕрпӳ районĕнчи прокуратура тĕрĕсленĕ хыççăн, çак материал тĕрĕс пулни палăрчĕ. Çĕрпӳ районĕнчи прокуратура çак ĕçе Чурачăк районĕнчи халăх судне панă. Чурачăк районĕнчи халăх сучĕ, ăна пăхса тухса, «Куганар» колхозăн кладовщикĕ пулса ĕçленĕ Мария Морозована колхоз тыррине салатнăшăн икĕ çуллăха тĕрмене хупса усрамалла тунă.

БЕЛОРУССИРЕ 2.250 ВУЛАВ ÇУРЧĔ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНА

Хĕле кĕнĕ май Белоруссири ялсенче халăха çутта кăларакан учрежденисем ĕçлеме пуçланă. Республикăра 2.250 вулав çуртне тата 110 культура çуртне юсаса хута янă ĕнтĕ. (ТАСС).

А. Я. Вышинский юлташ румынсен Совет Союзĕпе ытларах çыхăнас тĕлĕшпе ĕçлекен обществин делегацине йышăнни

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Паян, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ румынсен Совет Союзĕпе ытларах çыхăнас тĕлĕшпе ĕçлекен обществин делегацине йышăннă. Çав делегацие обществăн председателĕ — Румынин Наука академийĕн членĕ Пархон ертсе пырать.

Академик Пархон А. Я. Вышинские çав обществăн задачисемпе паллаштарнă тата Румыние ирĕке кăларнăшăн Совет правительствипе Сталин Маршала çав общество ячĕпе тав тума ыйтнă. Стоилов профессор А. Я. Вышинские общество членĕсем Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи çыхăнусене çирĕплетме пĕтĕм вăйпа тăрăшĕç, тесе каланă.

Румынсен Совет Союзĕпе ытларах çыхăнас тĕлĕшпе ĕçлекен обществин делегацине А. Я. Вышинский юлташ йышăнни çинчен пĕлтернине пур хаçатсем те пичетлесе кăларнă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Маас районĕнчи «миххе» (Голланди) тăшмантан тасатакан союзниксен çарĕсем Блиттерсвейк тата Брукхэйзен хулисем патне çитнĕ. Венло хулинчен çурçĕртерехре тăшман хăшпĕр тĕлте çеç Маасран хĕвеланăçнерехре хирĕç тăрать.

Юлих хулинчен хĕвеланăçнерехри районра союзниксен пехотипе танкĕсем çаплах контратакăсем тăваççĕ. Унтан кăнтăрталарахра урамсенче вăйлă çапăçнă хыççăн Вейсвейлер хулине тăшмантан тасатнă. Халĕ союзниксен чаçĕсем малалла, хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ.

Мерциг хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Саар шывĕ улăхĕнче союзниксен çарĕсем Оберш хули патне çитнĕ.

Мец хулинчен хĕвелтухăçнерехре (Франци) союзниксем, тăшман контратакисене çĕнтере-çĕнтере, малалла кайнă. Сомми тата Сен-Блез форчĕсене туртса илнĕ. Тăшман çавăн пекех Мариваль фортĕнчен те тухса кайнă. Союзниксен чаçĕсем, унтан пĕр миля çурă малалла кайса, Мец хулинчен 17 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларакан Рикранж хулине туртса илнĕ. Союзниксен ытти подразделенийĕсем Сент-Аво хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Цимминген хулине туртса илнĕ. Финштингер хулинчен çурçĕртерехри Гутенбруннер вăрманне тăшмантан тасатнă. Союзниксем, унтан виçĕ миля малалла кайса, Хункирх хули патне çитнĕ.

Саарбруг хулинчен çурçĕртерехре союзниксем нимĕçсен контратакине сирсе янă та хăйсенчен нимĕçсем туртса илнĕ позицисене каялла тытса илнĕ.

Союзниксен чаçĕсем Страсбург хулинчен хĕвеланăçнерехре Эльзас тӳремне тухнă.

Вăтам тата çăмăл бомбардировщиксем Гамбург, Гиссен тата Бергцаберн хулисенчи боеприпаспа горючи склачĕсене тапăннă. Йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавралăшĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире, Фаэнца хулинчен хĕвелтухăçнерехре, 8-мĕш армин чаçĕсем çурçĕр-хĕвелтухăçнелле, Русси хули патнелле куçса пынă. Фаэнца хулинчен кăнтăртарахра Англи чаçĕсем Марцено шывĕ çинчи укреплени патĕнчен наступлени туса пынă та Ламоне шывĕнчен хĕвелтухăçнерехри тата Бризигелл хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районе тăшмантан тасатса пĕтернĕ. Союзниксен çарĕсем çавăн пекех тата Модильяна хулинчен çурçĕртерехре малалла кайнă та Монте Микоча тата Монте Пруното ятлă çӳллĕ вырăнсене туртса илнĕ. 5-мĕш армири Америкăпа Англи чаçĕсем тăшманăн темиçе вăйлă контратакине сирсе янă.

АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО СЕКРЕТАРĔ КОРДЕЛЛ ХЭЛЛ ВЫРĂНТАН ТУХНИ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Ятарласа пухнă пресс-конференцире президент Рузвельт Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство секретарĕ Хэлл вырăнтан тухни çинчен пĕлтернĕ. Хэлл вăл чирлĕ пирки вырăнтан тухнă. Вăл вырăнтан тухнине эпĕ питĕ хурланса йышăнтăм, тенĕ Рузвельт.

Малалла Рузвельт çапла каланă: Хэлл малашне те Шурă Çуртпа таччăн çыхăнса тăрĕ, вăл тулашри политика ыйтăвĕсемпе президентăн советникĕ пулса ĕçлĕ, тенĕ.

ЭДУАРД СТЕТТИНИУСА ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕН ГОСУДАРСТВО СЕКРЕТАРĔ ВЫРĂННЕ ЛАРТНИ

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Президент Рузвельт Эдуард Стеттиниуса США государство секретарĕ пулса ĕçлеме лартнă.

ПРОИЗВОДСТВĂЛЛĂ ПРОФСОЮЗСЕН КОНГРЕСĔ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН СЪЕЗДНЕ ХУТШĂНМА ЙЫШĂННИ

ЧИКАГО, ноябрĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи производствăллă профсоюзсен конгресĕн съезчĕ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсем хушшинче пĕрлĕх тума чĕнекен резолюцие пĕр саслăн ырланă. «Производствăллă профсоюзсен конгресĕ пĕтĕм тĕнчери рабочисем хушшинче пĕрлĕх тума яланах чĕннĕ, çав пĕрлĕхе мĕнпур пĕрлешнĕ нацисен тата мĕнпур ирĕклĕ çĕршывсен профсоюзĕсем кĕмелле. — тенĕ резолюцире.—Çавăн пек пĕрлĕх вăл вăрçăра хăвăртрах çĕнтермешкĕн тата вăрçă хыççăн тĕрĕс те çирĕп мир тумашкăн питĕ кирлĕ».

«Производствăллă профсоюзсен конгресĕ, — тенĕ резолюцире малалла,—пĕтĕм тĕнчери рабочисен çĕнĕ, пĕрлĕхлĕ, хăватлă организацине тăвассине ырлать. Çав организацие ирĕклĕ çĕршывсенчи мĕнпур профсоюзсем пурте пĕртан шутланса кĕмелле, вĕсенчен нихăшне те иккĕмĕш вырăн памалла мар; çав организаци ахаль çынсен интересĕсене хӳтĕлеме пултармалла».

ФИНСЕН ПАЛЛА СОЦИАЛ-ДЕМОКРАЧĔ ФИНЛЯНДИРИ СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТСЕН ПАРТИЙĔН ПУÇЛĂХĔСЕМ ÇИНЧЕН МĔН ÇЫРАТЬ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче «Вапаа Апохола» ятлă хаçат И. В. Кето статьине пичетлесе кăларнă. И. В. Кето унта çапла çырать: социал-демократсен партийĕнчи оппозици çав парти вăрçă вăхăтĕнче ĕçленĕ чи паллă пуçлăхĕсене, уйрăм илсе кăтартсан — Таннера, Саловаарана тата Хаккилана ответлă вырăнсенчен тухма хистеме кирлĕ тесе шутлать.

Кето каланă тăрăх, Таннерăн хăйне социал-демократ тесе çӳреме сăлтав питĕ сахал.

Таннерпа Рюти пĕр-пĕринпе питĕ туслă пурăннине кăтартса парса, Кето малалла Финляндипе Германи Совет Союзне тапăнма мĕнле хатĕрленни çинчен интереслă даннăйсем илсе кăтартать: «Çав вăхăтра манăн пĕр тусăм (унăн ун чухнехи президентпа питĕ çывăх тăракан пĕлĕшĕсем пулнă) мана нимĕçсемпе финсем Совет Союзне хирĕç вăрçма хатĕрленни çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ ăна хирĕç çапла каларăм: социал-демократсен партийĕн пуçлăхĕсем Финляндие вăрçа хутшăнтарасшăн мар терĕм. Вара вăл çапла каларĕ: Таннерпа Хаккила президента йăлтах урăхла шантарса каланă, терĕ... Таннер вăл, Германи Совет Союзне те тата Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсене те çĕнтерессине хытă шаннă, вăл çавна май ĕçленĕ те вара».

Кето малалла çапла çырать: «Темиçе пухупа канашлура Таннер Германи союзлă çĕршывсене пĕтĕмпех çĕнтерессине цифрăсемпе çирĕплетсе панă. Таннер Сталинград патĕнчи çапăçусен юлашки кунĕччченех çавăн пек шухăшланă. Финляндире президент суйланă вăхăтра Таннер çав вырăна каллех Рютине суйлаттарма тем пекех тăрăшнă, çавăн пекех тата çĕнĕ правительствăна Германи майлă ĕçлекен тата Совет Союзĕпе малалла та вăрçма тăрăшакан çынсем анчах кĕччĕр тесе тăрăшнă. 1943 çулхи мартра США Финляндие Совет Союзĕпе мир тăвасси çинчен калаçма пуçлама сĕнсен, Таннер Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса тăракан Риббентроп патне Финляндин ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Рамсая янисенчен пĕри пулнă. Рамсая унта Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем мир тăвасси çинчен калаçма сĕнни çинчен каласа пама тата Финлянди çавăн пек калаçусем пуçласа яма пултарни-пултарманни çинчен ыйтса пĕлме янă. Германи мĕнле ответ пани паллă. Çапла вара, Финлянди мир çинчен калаçмалли меллĕ вăхăта алăран вĕçертнĕ. Таннер оппозицие хирĕç пуринчен те хытăрах туха-туха каланă. Вăл çав вăхăтрах тата Мускаврипе Тегеранри конференцисенче Совет Союзĕпе союзниксен интересĕсем пĕр-пĕринчен уйăрălса каяссине кăтартса пама хăтланнă. Вăл Совет Союзĕпе калаçассине яланах хирĕç тăнă. 1944 çулхи çуркунне Таннер Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене нимле те йышăнма юрамасть тесе шутланă. Çапла ĕнтĕ, Таннер тата унăн социал-демократсен партийĕнчи юлташĕсем Финляндие калама çук пысăк сиен кӳчĕç. Çав сиене вĕсем нихăçан та саплайрас çук».

Саловаарапа Хаккила çинчен Кето çапла çырать: «Саловаара, Таннер пекех, пысăк вырăн йышăнса тăнă. Анчах, тĕрĕссипе илсен, Саловаара чи реакциллĕ çынсен тулашри политикишĕн тата Германипе Финляндие вăрçăра туслăн пурăнтарассишĕн тата ытларах тăрăшнă.

Хаккила çинчен те асăнса илес пулать. Пирĕн çĕршывра Гитлер аттине çавăн пек парăнса чуптунă çын, Совет Союзĕ çинчен çав тери усал сăмахсем каланă çын урăх çук та пуль. Хăйĕн политики путланса ларнă хыççăн вăл çын сеймра председатель пулма пултараймасть тесе шутлать оппозици. Тепĕр хут калатăп: парти сейма суйланă чухне халăх массисем хăйне шанччăр тет пулсан, çав малта асăннă виçĕ çын партире чи ответлă вырăнсенче юлма пултараймаççĕ».

БОЛГАРИРИ ХАЛĂХ БАНКĔН ПРАВЛЕНИ ЧЛЕНĔСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

СОФИЯ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Тĕп айăплавçă Петров хушнипе, халăх милицийĕ Болгарири халăх банкĕн правленийĕн пĕр çын хăвармиччен тытса хупнă, банк управляющине Гунева та тытса хупнă. Çакна палăртнă: Германипе суту-илӳ тата финанс енĕпе çыхăнса ĕçленĕ чухнĕ сăтăрла политикăна пурнăçа кĕртсе пынă пирки, Болгарин халăх хуçалăхĕ 42 миллиард левлăх сиен курнă. Çак ĕçе халĕ тĕпчесе пĕлеççĕ. Банк правленийĕн членĕсене халăх судне пăраççĕ.

БУХАРЕСТРА ФАШИСТСЕНЕ ТЫТСА ХУПНИ

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Шалти ĕçсен министерстви Бухарестра тытса хупнă 94 «легионерăн» списокне пичетлесе кăларнă (легионерсем вĕсем — «тимĕр гварди» ятлă фашистла организаци членĕсем).

ИТАЛИРИ ПРАВИТЕЛЬСТВО КРИЗИСĔ

РИМ, ноябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Римри радио пĕлтернĕ тăрăх, Бономи правительстви вырăнтан тухнă хыççăн правительствo коалицине кĕрекен ултă партин пуçлăхĕсем канашлу туса ирттернĕ. Канашлу хыççăн вĕсем пĕрле çапла пĕлтернĕ:

«Çак коалици хальхи условисенче çĕршывăн чăн-чăн ирĕкне палăртса тăрать. Пирĕн халăхăн тĕллевĕ хамăр çĕршыва ирĕке кăларассишĕн, фашизма пĕтерсе тăкассишĕн тата çĕнĕрен демократи туса хурассишĕн кĕрешесси пулать. Коалициллĕ правительство Итали халăхĕн ирĕкне тĕрĕс палăртса тăрать».

Римри радио хăй енчен çапла хушса каланă: çак пĕлтерĕве премьер Бономи йышăннă, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04217 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.